Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерÿ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

54 (7479) № ✻ Юн кун, 2007 çулхи июлĕн (утă) 4-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ



*Хальхи вăхăтра библиотекăсем çынсене кĕнекесемпе тивĕçтернипе кăна çырлахса лармаççĕ. Вĕсем культурăпа информаци центрĕсем пулса тăраççĕ, вĕсене хальхи кирлĕ оборудованисемпе тивĕçтерни, компьютерсем вырнаçтарнă, Интернета тухма пулать. Вĕсемпе ĕçлеме вара ăста специалистсем кирлĕ.*

*Эсир сăн ÿкерчĕкре куракан Лариса Николаевна Сорокина районти тĕп библиотекăн информаци центрĕн заведующийĕнче тăрăшать. Хăйĕн ĕçне пĕлсе пурнăçлать вăл.*

*В. ШАПОШНИКОВ сăн ÿкерчĕкĕ.*

## Симĕс ĕç çи

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШÿЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ ИЮЛĔН 3-МĔШĔ ТĔЛНЕ ВЫЛЬĂХ АПАЧĔ ХАТĔРЛЕС ĔÇСЕМ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТНИ**

**Цифрăсен колонкисенче: 1. Нумай çул ÿсекен курăксене çулса пухмалла планпа. 2. Пĕтĕмпе çулнă (гектарпа). 3. Утă хатĕрлемелле планпа. 4. Утă типĕтсе купаланă (тоннăпа).**

| | 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 410 | 140 | 475 | 60 |
| «Волга» | 583 | 155 | 640 | 82 |
| «Восток» | 225 | 122 | 224 | 142 |
| «Герой» | 275 | 100 | 520 | 120 |
| «Агро-Урожай» | 35 | | 105 | |
| К. Иванов яч. хис. | 325 | 30 | 492 | 30 |
| Ильич яч. хис. | 480 | 270 | 650 | 60 |
| ООО «ВТМ» | 690 | 15 | | |
| Ленин яч. хис. | 550 | 150 | 675 | 20 |
| «Лидер» АФ | 462 | 160 | 823 | 25 |
| «Дружба» АФ | 465 | | | |
| «Оринино» | 621 | 160 | 600 | 80 |
| «Передовик» | 874 | 250 | 1310 | 94 |
| «Свобода» | 440 | 210 | 1108 | 70 |
| «Сеятель» | 646 | 120 | 375 | 80 |
| Суворов яч. хис. | 664 | 160 | 669 | 136 |
| «Рассвет» АФ | 515 | 120 | 624 | 102 |
| «Нива» АФ | 582 | | | |
| «Ударник» | 1274 | 350 | 1537 | 571 |
| Чапаев яч. хис. | 335 | 100 | 524 | 45 |
| «Чемеево» | 297 | 132 | 410 | 110 |
| Чкалов яч. хис. | 232 | 140 | 408 | 80 |
| **Ял хуçалăх предприятийĕсемпе** | **11059** | **2889** | **12169** | **1907** |

## Çил-тăвăл

# Çын вилни пулман

**Республикăра.** Иртнĕ тунти кун Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров эрне пуçламăшĕнче йăлана кĕнĕ йĕркепе Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе тата федераци ведомствисен территори органĕсен ертÿçисемпе канашлу иртгернĕ. Гражданла оборона тата синкерлĕ пулăмсем енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн представителĕ Виталий Петьков икĕ талăк алхаснă çил-тăвăл темиçе объекта сиенленине пĕлтернĕ. Хăш-пĕр тапхăрта çил хăвăртлăхĕ çеккунтра 25 метра çитнĕ. Республикăн ултă районĕнче 215 трансформатор подстанцийĕ сÿнсе ларнă, 18 ял тата 12 ял хуçалăх предприятийĕ, 15 шкул, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен 14 ферма çутăсăр тăрса юлнă. Татăлнă электропралуксене çитес вăхăтрах сыпăнтарĕç, палăртнă Виталий Петьков. Çиçĕм çиçнине пула икĕ пушар тухнă, уйрăм çынсен çурчĕсен тата хăш-пĕр шкул тăррисене сирсе ывăтнă.

Республика ертÿçи пурлăха сиен кÿни мĕн хака ларнине шутлама, кирлĕ пулсан Министрсен Кабинечĕн резерв фондне ÿстерес ыйтăва пăхса тухма тата республика бюджетне улшăнусем кĕртессипе сĕнÿсем пама хушнă.

Ларура Чăваш Енри курав ĕç-хĕлĕн аталанăвĕн çулйĕрне сÿтсе явнă. Николай Федоров Министрсен Кабинетне Пĕтĕм Раççейри тата тĕнчери куравсене пысăк шайра иртгерес тĕлĕшпе ятарлă ĕçсем туса иртгерме хушнă.

Канашлура çавăн пекех муниципалитетăн вĕрентÿ территорийĕсене хăтлăрах тăвассипе çыхăннă ыйтусене, республикăн социаллă пурнăçпа экономика ыйтăвĕсене пăхса тухнă.

**ЧР ПА пресс-службы.**

---

**Районта.** Район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру пайĕнчен çапла пĕлтерчĕç. Вăйлă çил-тăвăл районти тăватă ял тăрăхне ытларах сиен кÿнĕ. Хорнуй ял тăрăхне кĕрекен Хорнуй ялĕнче çутă юписемпе пралукĕсене тăпăлтарнă, 5 уйрăм хуçалăха сиен кÿнĕ. Сиенĕн малтанхи шайĕ 17000 тенкĕпе танлашать.

Чуманкасси ял тăрăхĕнчи сиене вара 23000 тенкĕпе палăртаççĕ. Унта шкул, Культура çурчĕн, хваттерсен çивиттийĕсене хăйпăтнă, чылай çĕрте çутă çук. 5 уйрăм хуçалăхран тĕрлĕ сиен пирки пĕлтернĕ.

Муркаш ял тăрăхĕнчи Шаптак, Çурлатри ялĕсем инкек тÿснĕ. 8 уйрăм хуçалăха ытларах сиен кÿнĕ, çутă пралукĕсене чылай çĕрте татнă. Пĕтĕмĕшле сиен хакĕ 15000 тенкĕпе танлашать.

Оринин ял тăрăхĕнчи Лантăш ялĕнче вырнаçнă “Моргаушагропромхими” организацие 10000 тенкĕлĕх сиен кÿнĕ.

Палăртса хăвармалла, ял тăрăхĕсенчи уйрăм хуçалăхсем, инкек тÿснисем пурте ял тăрăхĕсене пĕлтермен. Çÿлерех асăннă сиен хакĕсем те малтанласа пĕтĕмлетнисем. Инкек тÿснĕ вырăнсене ятарлă комисси тухса тĕрĕслет. Халĕ вара хăш-пĕр çĕрте юсав ĕçĕсем пуçланнă та ĕнтĕ.

Халăх каларăшĕнчи пек ÿкессе пĕлнĕ пулсан мĕн тумаллине малтанах шутлакансем вара тĕрĕс тунă пулĕ. Çавăнпа та хушма хуçалăха вăхăтра страхлани вырăнлă ĕнтĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

## Пултаруллă яш-кĕрĕм

# Медальсене тивĕçнĕ

*Республика кунне тата Раççей çамрăкĕсен кунне халалласа район центрĕнче июнĕн 27-мĕшĕнче çамрăксен «Королевская ночь» уявне иртгерни пирки хаçатра çырса кăтартнăччĕ. Ытти тĕрлĕ мероприятисем иртгернипе пĕрлех унта кăçал вунпĕрмĕш класа ылтăн тата кĕмĕл медальсемпе вĕçлекенсене те чысларĕç.*

**«Вĕренÿре тунă уйрăмах пысăк çитĕнÿсемшĕн» ылтăн медале çаксем тивĕçнĕ:**

– Оксана Вячеславовна МИХАЙЛОВА (Муркаш шкулĕ);
– Наталья Сергеевна МУРЫГИНА (Муркаш шкулĕ);
– Ирина Александровна СУВОРОВА (Муркаш шкулĕ);
– Ирина Владимировна ХРУСТАЛЕВА (Муркаш шкулĕ);
– Татьяна Борисовна СЕМЕНОВА (Муркаш шкулĕ);
– Татьяна Валериановна СУРАНОВА (Муркаш шкулĕ);
– Олеся Владимировна КУРБАНОВА (Муркаш лицейĕ);
– Инна Викторовна АРХИПОВА (Мăн Сĕнтĕр шкулĕ).

**«Вĕренÿре тунă уйрăмах пысăк çитĕнÿсемшĕн» кĕмĕл медале çаксем тивĕçнĕ:**

– Татьяна Юрьевна ЕРШОВА (Муркаш лицейĕ);
– Инга Серафимовна ВАРЛАМОВА (Муркаш лицейĕ);
– Людмила Борисовна МИРОВАЕВА (Муркаш лицейĕ);
– Наталья Димитриевна ХАРИТОНОВА (Муркаш шкулĕ);
– Ксения Юрьевна ГРИГОРЬЕВА (Калайкасси шкулĕ);
– Валентина Валерьевна КАЛИНИНА (Калайкасси шкулĕ);
– Анна Владимировна ЯНДУШКИНА (Нискасси шкулĕ);
– Людмила Ильинична ОЛБУТОВА (Нискасси шкулĕ);
– Наталья Сергеевна КАЛИКОВА (Оринин шкулĕ);
– Наталья Николаевна РЕПИНА (Оринин шкулĕ);
– Александр Владимирович АЛЕКСЕЕВ (Турай шкулĕ);
– Олеся Юрьевна МАРКОВА (Чуманкасси шкулĕ);
– Надежда Юрьевна СЕРГЕЕВА (Чуманкасси шкулĕ).

## Йыхрав

# Çĕрпÿсем ярмăрккăна чĕнеççĕ

Çĕрпÿ район администрацийĕ июлĕн 5-мĕшĕнчен тытăнса 8-мĕшĕччен суту-илÿ организацийĕсене тата кăмăл тăвакансене йăлана кĕнĕ май çуллен июль уйăхĕн пуçламăшĕнче иртгерекен Çĕрпÿ ярмăрккине чĕнет. Кунта çулленех мăк, килти выльăх-чĕрлĕх тата кайăк-кĕшĕк, халăх ăстисен, килти хатĕр-хĕтĕре сутаççĕ. Ярмăрккă кунĕсенче аттракционсем ĕçлеççĕ, спорт мероприятийĕсем, концерт программисем, фестивальсем, конкурссем, ачасен вăййă программисем, çамрăксен дискотекисем иртеççĕ.

Ярмăрккă Çĕрпу хулинче Ярмăрккă площадĕнче иртет. Çыхăнмалли телефонсем: 8-83545-21-3-29; 21-3-15; 21-5-65; 21-3-79.

## Право ыйтăвĕсемпе

# Налуксене вăхăтра тÿлемелле

Хальлĕхе район территорийĕнче тĕрлĕрен налуксене вăхăтра тÿлесе тăман предприятисемпе организацисем те çук мар-ха. Вĕсен ертÿçисем ку енĕпе парăмсене татма тивĕçлĕ мерăсем йышăнма тăрăшмаççĕ. Çавна май район прокуратури предприятисенче налук законодательствине мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесех тăрать. Тĕрĕссипе вара налуксемпе тÿлевсене вăхăтра тÿлесе тăрассипе законодательство требованийĕсене пурнăçламанни патшалăх ĕçĕ-хĕлне финанс тĕлĕшĕнчен йывăрлăха кĕртсе ÿкерме пултарать. Налуксене йĕркеллĕ тÿлесе тăрасси – патшалăх требованийĕ. Ку енĕпе прокуратура малашне те ĕçлесе пырĕ, парăмçăсем тĕлĕшпе вара тивĕçлĕ мерăсем йышăнма тивĕ.

**Д. ВИКТОРОВ,**
**район прокурорĕн аслă пулăшаканĕ.**

## Ыйту хурав кĕтет

# Мĕнпе айăпа кĕтĕмĕр-ши?

Мĕнпе айăпа кĕтĕмĕр-ши?Çулпа çул пĕр килмест. Хăш-пĕр çулсенче çу каçипе çумăр çăвать те, уйри тыр-пул та, килти пахча çимĕç те пысăк тухăçпа савăнтараççĕ. Мĕн тăвăн – ял çынни пысăк укçа ĕçлесе илеймест те, унăн хăйĕн хушма хуçалăхĕ, тăрăшулăхĕ çине кăна шанса пурăнать. Çемьене те усрамалла.

Анчах та пурнăçра хамăртан килмен инкек-пăтăрмахсем сиксе тухни пире самаях канăçсăрлантарать.

Пурăнас текен çын яланах малалла туртăнать, ыранхи кунпа пурăнса ыррине кăна ĕмĕтленет. Халĕ чылай чухне пурнăç кунсерен çĕнелсе лайăхланса пыни çинчен телевиденипе радио та, хаçатсем те пĕлтерсех тăраççĕ.

Анчах та хамăр мĕнле пурăннине шутласан пачах тепĕр майлă пĕтĕмлетÿсем тăвас килет. Ĕçĕ кунта акă мĕнре. Май-июнь уйăхĕсем иртрĕç пулин те, кăçал ял çыннисене, çĕр ĕçченĕсене çумăр çуса савăнтараймарĕ. Пĕрре кĕске вăхăт хушши çуса иртнĕ çумăр çĕре йĕкĕлтенĕ пек кăна пулчĕ.

Эпир Муркаш ял администрацине кĕрекен Шаптак ялĕнчи Прудовая урамра пурăнатпăр. Пĕрре çумăр çуманни ăша пĕçерчĕ. Тепĕр енчен илсен, пирĕн урамра майăн 20-мĕшĕнчен тытăнсах колонкăсенче шыв çук – ĕçме те, йăрансене шăварма та. Кам мĕнле пĕлет, çапла саплашкаласа пурăнать. Сăлтавĕ акă мĕнре: пире шывпа тивĕçтерекен башня насусĕ виçĕ ял валли шыв уçласа тăрать. Халĕ вара вăл та çунса кайнă иккен. Башни вара Е. Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăх çинче тăрать. Шывпа усă курнăшăн укçине кашни уйăхрах тÿлесе тăратпăр. Уйăхне 75 тенкĕ, 150 килтен çулталăкне 150 пин тенкĕ пухăнать.

Шыв башнин насусне улăштарма заявлени Е.Андреев ячĕпе хисепленекен хуçалăх ертÿçи В.И. Семенов патне те, Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин патне те заявленипе тухрăмăр. Анчах пĕри те ял халăхне шывпа тивĕçтерессине хăйсем çине илмеççĕ. Халĕ вара çĕнĕ насус илме укçа çук теççĕ. Халăхран пухнă укçа ăçта каять-ши? Çав укçапа колхоза çĕклесшĕн-ши? Пĕлтĕр те çу каçипех январь уйăхченех шывсăр пурăнтăмăр. Укçине тÿлесе тăрсах çав таранччен мĕнпе айăпа кĕтĕмĕр-ши? Шывсăр пĕр кун пурăнма та мĕнле йывăр. Çын çинчи – йывăç çинчи, тенĕ ваттисем.

Çак çырăва район хаçатĕнче пичетлесе, пире шывпа йĕркеллĕ тивĕçтерсе тăма тивĕçлĕ органсем пулăшасса шанса тăратпăр.

**Ял çыннисем ыйтнипе**
**Л. АТЛАСКИН.**

Шаптак ялĕ.

## Юбилей

# *Саламлатпăр*



От всей души поздравляем 70-летием **Меркурия Ивановича ИВАНОВА.**

Любой юбилей – это чуточку грустно,
Ведь это из жизни уходят года.
Но если года эти прожиты честно –
Не надо об этом жалеть никогда.
Много слов хороших хочется сказать,
Доброго здоровья в жизни пожинать,
Сердцем и душою вечно молодеть
И прожить на свете еще много лет.

**Жена, дети, внучки.**

---





Оринин ял тăрăхне кĕрекен Патаккасси ялĕнче пурăнакан **Раиса Никоновна СУЧКОВА-НА** июлĕн 4-мĕшĕнче 60 çул тултарнă ятпа чунтан тухакан чи ăшă кăмăлпа саламлатпăр. Унăн мăшăрне те **Борис Александрович СУЧКОВА** 64 çул тултарнă ятпа саламлас килет.

Эсир пурри – пирĕн савăнăç, пуянлăх. Эсир ырă кăмăлупа, ĕçченлĕхÿпе, тирпейлĕхÿпе палăрса тăратăр. Сире эпир ырлăх-сывлăх, телей сунатпăр, ватлăху канлĕ пултăр. Пирĕншĕн яланах эсир ырă кăмăллă пулнă, малалла та çаплах пулăр.

Çулсем иртни сире ан кÿтĕр тунсăх,
Вăй-халусем çеç пулччăр иксĕлми.
Сире сунатпăр ырлăх-сывлăх
Тата çап-çут телей нихçан сÿнми.

**Саламлаканĕсем: Орининсем, Муркашсем, çывăх тăванĕсемпе ял-йышсем.**